чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

1 /26407/№ Эрне кун, 2014, кăрлач (январь), 10 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

*Тĕл пулу*

## Пирвайхи ĕç кунне культурăна халалларĕ

***2014 çул Раççейре – Культура çулталăкĕ. Çакна шута илсе Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кăçалхи пĕрремĕш ĕç кунне асăннă тытăмри ыйтусенчен пуçларĕ. Культура министрĕпе Вадим Ефимовпа тата вĕренӳ министрĕпе Владимир Ивановпа пĕрле вăл Чăваш патшалăх культурăпа ӳнер институчĕпе Чăваш республика культура училищине çитсе курчĕ.***

Каласа хăварам: 2013 çулта РФ Вренӳпе ăслăлăх министерстви вĕренӳ аслă заведенийĕсен мониторингне ирттернĕ май асăннă институтăн «тухăçсăрлăх паллисем» пур тесе палăртнăччĕ. Мускаври комиссие сисчĕвлентерекен аслă шкул чăннипе мĕнле сывлатьха, пăшăрханмалли фактсем чăннипех пур-и? Çакна вырăна çитсе тишкерме тĕв турĕ те республика ертӳçи. Чи малтанах учрежденин вĕренӳ тата пурăнмалли корпусĕсене пăхса çӳресе хакларĕ. Спортзал, столовăй мĕнлерех лару-тăрура пулни питех кулянтармарĕ. Общежитин çи виттине улăштармалли вара – куç кĕрет. Ку ĕçе вăраха ямасăр пурнăçламалла.

«Экскурси» вĕренӳ пӳлĕмĕсене куçсан Чăваш Ен Пуçлăхĕн кăмăлĕ çĕкленчĕ. Акă Анна Тукмакова юрлама хăнăхнине сăнарĕç те – чăваш опери тепĕр талантпа пуянланасса ĕненчĕç. Çемьери 11-мĕш/!/ ача иккен Аня. Улатăр районĕнче çуралса ӳснĕ чăваш хĕрĕ спортра та пысăк çитĕнӳсем кăтартать. Эппин, пурнăçра вăл хăйĕн вырăнне çирĕп йышăнасси иккĕлентермест.

Училищĕпе институт вĕренекенĕсемпе тата педагогсемпе Михаил Игнатьев ирĕклĕ лару-тăрура тĕл пулчĕ – ушкăнпа чей ĕçнĕ май канăç паман ыйтусене сӳтсе яврĕç. Вĕренӳ заведенийĕсен ертӳçисем Геннадий Чиркинпа Ирина Медведева хăйсен калаçăвĕнче саманапа тан утма тăрăшнине палăртрĕç. Специальноçа алла илни – пĕрре, унпа тивĕçлĕ ĕç тупма пулать-и? Çак ыйту чылайăшне канăçсăрлантарать. Ирина Александровна ĕнентернĕ тăрăх – институтра вăл е ку специальноçа ĕç рынокне тĕпченипе килĕшӳллĕн уçаççĕ. Тĕслĕхрен, кĕçех чиркӳ хорĕ валли те профессионалсем хатĕрлеме шухăш çирĕпленнине палăртрĕ ректор.

– Мониторинг пĕтĕмлетĕвĕ хыççăн ырă улшăнусем чылай пулчĕç. Сăмахран, вĕренме кĕнĕ чухне шута илекен ППЭ вăтам кăтартăвĕсем ӳснĕ. Кадрсен пахалăхне те лайăхлатрăмăр. Ĕçе вырнаçассин шайĕ те пĕчĕк мар: студентсен 90 ытла проценчĕ культурăпа ӳнер тытăмĕнчех ĕç тупать, – лару-тăру лайăх енне улшăнасса шантараççĕ И. Медведева сăмахĕсем.

Килсе çитнĕ пысăк хăнасенчен студентсем мĕн пирки ыйтса пĕлчĕç-ха? Паллах, халăхра çӳрекен тĕрлĕ сас-хура вĕсене те шухăша янă: заведенирен тĕрĕс-тĕкел вĕренсе тухайĕç-и? Анна Кокарева пĕрремĕш курсра çеç-ха та – пушшех пăшăрханать. Чăваш Ен Пуçлăхĕ студенткăна лăпкăлăха çухатмасăр тăрăшса вĕренме сунчĕ. Елена Кошкина культура училищинчен вĕренсе тухсан яла ĕçлеме каясшăн, патшалăх мĕнлерех пулăшу пама пултарни пирки интересленет. Альбина Захарова Мускаври паллă актерсен ăсталăх класĕсене çав тери хавхаланса кĕтет, тĕл пулусене Культура çулĕнче ытларах йĕркелеме сĕнет. Елизавета Голева хăйĕн профессине музыкăпа çыхăнтарасшăн, анчах паян шкул ачисен юрă-кĕвĕ искусстви пирки пĕлĕвĕ питĕ чухăннишĕн пăшărханать, вĕренӳ министрне программăна хушма занятисем кĕртме май туптарасшăн.

Михаил Игнатьев çамрăксен мĕн пур ыйтăвне тĕплĕн тишкерме сăмах пачĕ. Чăвашсен чи хаклă пуянлăхĕ ĕмĕртен ĕмĕре упранса пыракан культура еткерлĕхĕ пулнине асра тытма сунчĕ.

**Ирина ПУШКИНА**

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2013 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнчи 142-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх граждан службинче нумай çул лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тĕрĕслев управленийĕн консультантне **Надежда Павловна НИКОЛАЕВĂНА** Чăваш Республикин **ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тухăçлă вăй хунăшăн «Газпром трансгаз Чул хула» тулли мар яваплă обществăн /магистраль газ пăрăхĕсен Атăл леш енчи линипе производство управленийĕ/ филиалĕн пуçламăш профсоюз организацийĕн «Заволжский» клубĕн илемлĕх ертӳçине **Михаил Васильевич ДМИТРИЕВА** /Красноармейски районĕ/, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Валерьян Толстов-Атнарский ячĕллĕ «Çын тата çут çанталăк» халăх тавра пĕлӳ музейĕ» культура бюджет учрежденийĕн директорне **Зоя Сергеевна СПИРИДОНОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

вĕренӳри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин тĕп специалистне **Лариса Ивановна КНЯЗЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

строительствăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн «Автовокзалсем тата Автостанцисем» АУОн генеральнăй директорĕн çумне **Татьяна Ивановна БОДРОВĂНА,** Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерствин пай пуçлăхне **Станислав Иванович ЧИЖОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят панă.

## Пукрав-Татиана чиркĕвĕнче – Раштав кĕлли





***Кăрлачăн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев мăшăрĕпе Лариса Юрьевнăпа Раштав кĕллинче пулнă. Ăна Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава Шупашкар хулинче Пукрав-Татиана чиркĕвĕнче ирттернĕ. ЧР Наци телерадиокомпанийĕ служба пынине тӳрремĕнех трансляциленĕ.***

Раштав кĕлли вĕçленнĕ хыççăн республика Пуçлăхĕ вырсарни шкулĕн ĕçĕпе паллашнă. Ăна Пукрав-Татиана соборĕнче 2013 çулта уçнă. Шкул тĕллевĕсем – ачасен ăс-хакăл вăй-хăватне туллин уçасси, православин нумай çулхи йăли-йĕркине ăнланма, унпа хăйсен хушшинчи çыхăнăва туйма вĕрентесси. Палăртнисене пурнăçламашкăн вырсарни шкулĕнче тĕрлĕ енĕпе ĕçлеççĕ: ачасене православи культурин никĕсĕсене /Турă Саккунне/, чиркӳ-славян вулавне, сăваплă историе, ӳкерӳ ăсталăхне тата ыттине те вĕрентеççĕ.

Чиркӳ çумĕнче çавăн пекех православи тĕнне ĕненекен çамрăксен «Омофор» клубĕ ĕçлет.

**А.ВАСИЛЬЕВА.**

Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

*Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсем*

## Пурнăç – малалла!

***Сисмерĕмĕр те – çĕнĕ 2014 çул çитрĕ. Асамлăхпа палăрса тăракан çак уява кĕтсе илнĕ хыççăн 8 кун кантăмăр. Меллĕ самантпа усă курса чылайăшĕ хăнана васкарĕ, сывăх çыннисемпе курнăçрĕ, теприсем тĕнче курса çӳрерĕç, виççĕмĕшĕсем сывлăхне çирĕплетес тĕллевпе йĕлтĕрпе, конькипе ярăнчĕç… Çав вăхăтрах пирĕн республикăра çемье çавăрса туй кĕрлеттерекенсем те, ача çуратакансем те пулнă. Пурнăç уяв кунĕсенче те пĕр вырăнта тăмасть çав. Чăваш Енре 2014 çулăн малтанхи сакăр кунĕнче тата мĕн кăсăкли-асра юлмалли пулнă-ха?***



Акă кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче Элĕк районĕнче Мендельсон маршĕ кăçал пĕрремĕш хут янăранă. Сергейпа Елена Александровсене çемье çавăрнă ятпа районадминистрацин ЗАГС уйрăмĕн ĕçченĕ Валентина Трофимова саламланă. Патăрьел районĕнче кăрлач уйăхĕн 4-мĕшĕнче икĕ мăшăр çырăннă: Айратпа Резеда Сыраевсем тата Марсельпе Алсу Хасяновсем. Çамрăксем телейлĕ çак куна ĕмĕрлĕхе ас туса юласси иккĕлентермест. Кăрлач уйăхĕн 1-8-мĕшĕсенче Чăваш Енре миçе çын официаллă майпа пĕрлешнине республикăри ЗАГС уйрăмĕн ĕçченĕсем татăклăн калаймарĕç – районсем вĕсене ку кăтартусене уйăх вĕçленсен çеç параççĕ-мĕн. Православи тĕнне ĕненекенсемшĕн кăрлач уйăхĕн 7-мĕшĕччен Раштав типпи пынăран Лаша çулталăкĕн малтанхи эрнинче туй кĕрлеттерекен питех йышлă пулман пек туйăнать. Халĕ типĕ вăхăчĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, çавăнпа ятсăр пӳрнине ылтăн çĕрĕ тăхăнакансен шучĕ палăрмаллах ӳсĕ.



2014 çулта ача ытларах çураласса та шанас килет. Акă Шупашкарти Хула клиника 1-мĕш больницин перинаталь центрĕнче уяв кунĕсенче 151 ача – 73 ывăлпа 78 хĕр ача – çут тĕнчене килнĕ, çав шутра йĕкĕреш те пур. Пĕрремĕш пепке – хĕр пĕрчи – кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче 3 сехет те 25 минутра кун çути курнă. Сăмах май, 2012 çулта Хула перинаталь центрĕн ĕçченĕсем 7747 пепкене çуралма пулăшнă. Уяв кунĕсенче республикăри ача çуратмалли ытти çуртра та нумай хĕрарăм амăшĕн телейне пĕрремĕш е черетлĕ хут туйнине ĕненетпĕр. Саккунпа килĕшӳллĕн – пепкене çуралсан пĕр уйăхра ят хума юрать. Çапах ашшĕ-амăшĕнчен чылайăшĕ савăнăçлă çак утăма май килнĕ таран хăвăртрах тума тăрăшать. Комсомольски район администрацийĕн ЗАГС уйрăмĕнче, акă, уяв кунĕсенче кăçал çуралнă виçĕ ачана ят хунă. Телейлĕ ашшĕ-амăшне саламлатпăр!

● ➡ 4 стр.

## КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

### «Хыпар» журналисчĕ – пĕрремĕш

***ЧР Юстици министерстви коррупципе кĕрешес енĕпе çуллен ирттерекен конкурссене пĕтĕмлетнĕ. Çулталăк вĕçĕнче çĕнтерӳçĕсене наградăларĕç.***

Юстици министрĕ Надежда Прокопьева коррупцин тарăн тымарĕсене кăклас ĕçре асăннă конкурссен пĕлтерĕшĕ пысăккине палăртрĕ. Вĕсене кашни çулах темиçе енĕпе йĕркелеççĕ. Студентсемпе аспирантсем, аслă вĕренӳ заведенийĕсен çамрăк ученăйĕсем коррупципе кĕрешессипе çыхăннă темăпа тĕпчевсем хатĕрлеççĕ. Кăçал пуçласа ачасене те явăçтарнă: кĕçĕн классенче вĕренекенсем ӳкерчĕксем тăратнă, аслăраххисем эссесемпе сочиненисем çырнă.

Министр аллинчен пресса представителĕсем те наградăсем илчĕç. Палăртма кăмăллă: комисси «Хыпар» хаçатăн коррупципе кĕрешес ĕçе хывнă тӳпине пысăка хурса хакланă – пай редакторĕ Николай Коновалов конкурсра 1-мĕш вырăн йышăннă. Малти вырăна унпа пĕрле Людмила Смагина («Советская Чувашия» хаçат) пайланă. 2-3-мĕш вырăнсенче – Валерий Мутрисков («Грани»), Зинаида Павлова («Хĕрлĕ ялав»), Сюзанна Сташенко («Республика»).

**К.АНТОНОВ.**

### «Çавал» Олимпиадăна илем кӳрĕ

***Чăваш патшалăх филармонийĕ çумĕнчи «Çавал» ансамбле йĕркеленĕренне 36 çул иртнĕ. Çак тапхăрта вăл таçта та, çав шутра ют çĕр-шывсене те, гастроле тухса çӳренĕ.***

Тепĕр уйăхран Чăваш Енри паллă ансамбль Сочие пырса çитĕ, Олимпиадăн культура мероприятийĕсене чăваш юррикĕввипе илем кӳме пуçлĕ.

Халĕ вара «çавалсем» хĕрсех репетици ирттереççĕ.

**Н.СМИРНОВА.**

### Уява – вулавăша!

***Элĕкри тĕп вулавăшра «Тĕнчене – çутă» программăпа килĕшӳллĕн йăлана кĕнĕ Раштав тĕл пулăвĕ иртнĕ. Асăннă мероприятин тĕп тĕллевĕ – Раççейри православи праçникĕсен йăли-йĕркине упраса хăварасси тата аталантарасси.***

А.Егорова библиотекарь пухăннисене Раштав (Сурхури), Кăшарни уявĕсем, çветке пирки каласа панă. Çав тапхăрта хĕрсемпе каччăсем юмăç пăхнă, пĕр-пĕрне măйăрпа, хĕвел çаврăнăшпа сăйланă.

Раштаври тĕл пулусене «Сиплевçĕ пăтти, апăс тата ача амăшĕ пулма хатĕрленекен» праçникне халалланă. Ăна авалтанах кăрлачăн 8-мĕшĕнче палăртнă. Вулавăш ĕçченĕсем «Ырă пăтă çемьене пăсмасть» кĕнеке куравĕ йĕркеленĕ. Кунтах тĕрлĕ пăтă рецепчĕ вырăн тупнă. Ачана тĕне кĕртме вир тата хура тулă кĕрпинчен янтăланă пăтта «Сиплевçĕ пăтти» теççĕ. Уявра апăс карчăк рольне Элĕк больницинче ача çуратмалли уйрăмра 30 çул медсестрара ĕçленĕ Надежда Иванова выляна. Вăл пурне те сиплевçĕ пăттипе хăналанă, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр суннă. Уявра çавăн пекех юмăç пăхнă, пĕр-пĕрне парнепе савăнтарнă.

**Р.АНАТОЛЬЕВА.**

### Вăрнарта – «Джинс тĕнчи»

***Районти пултаруллă çынсене тупасси, вĕсене аталанма пулăшасси – çакăн пек тĕллевсемпе ĕçлет Вăрнарти историпе тавра пĕлӳ музейĕ. Унти курав залĕнче куллен художниксен, алă ăстисен выставкисем иртеççĕ.***

Çак кунсенче аваллăх управçинче «Джинс тĕнчи» ятли уçăлнă. Вăл Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Фаина Александровăн пултарулăхĕпе паллаштарать. Экспозицире – джинс пусмаран çĕленĕ сумкăсем, çăраççи хутаçĕсем, минтерсем, чĕр чун кӳлеписем тата ытти те. Авторăн кашни ĕçĕ хăйне евĕрлĕхĕпе палăрать.

«Ку – манăн пĕрремĕш курав. Ăна музей директорĕ Елена Шарипова сĕннипе йĕркелерĕм. Алă ĕçĕ тăвасси – манăн йăпанăç. Анне мĕн пĕчĕкрен çĕлеме, тĕрлеме, çыхма вĕрентнĕ. Паллă пĕр сайтри «Ыр кăмăллăх марафонĕ» страницăпа тăтăш паллашатăп. Халĕ унта Шупашкарти 9 уйăхри Дима Григорьева сиплеме укçа-тенкĕ пухаççĕ. Эпĕ те выставкăра пухăннă нухрата пĕчĕк Димăна сыватма куçарса парасшăн»,– тенĕ Фаина Александрова курава уçнă самантра.

**А.ГРОМОВА.**

### Гранта тивĕçнĕ

***Çак кунсенче проектсен Пĕтĕм Раççейри конкурсĕн çĕнтерӳçисене палăртнă. Çамрăксене пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕскер кăçалхипе иккĕмĕш хут иртнĕ.***

Конкурса çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пурĕ 12500 ытла ыйтса çырни çитнĕ, «Инновацисем», «Сывлăх», «Пуçарулăх», «Медиа», «ЖКХ тата строительство», «Пултарулăх» тата ытти номинацие 7000 яхăн ĕç тăратнă.

Çĕнтерӳçĕсен йышĕнче – Чăваш Ен пикисем те. Шупашкарти политехника институчĕн экономикăпа право факультетĕнче вĕренекен Ольга Григорьевăпа Елена Грудановăн «Ача сачĕсенче хушма ушкăнсем уçасси» проекчĕ «Инновацисем» номинацире çĕнтерсе 50 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ. Вĕсен ĕçĕ пĕлтĕр Ĕпхӳре иртнĕ «Манăн çĕр-шыв – манăн Раççей» конкурсра та иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ.

**А.ПЕТРОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 0, каçхине 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 744 мм, сывлăшри нӳрĕк 96 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 21 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çукалать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла та, каçхине те 1 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 732 мм, сывлăшри нӳрĕк 96 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 24 минут.**

*Тӗслӗх*

# Йышпа пӗр чӗлхе тупсан...

***Ир ҫутӑлмасть халӗ. Тавралӑх тӗттӗм чаршавне сиричченех ӗҫе кайма тухаҫҫӗ ҫынсем. Лӑпкӑн ӳкекен юр пӗрчисем вӗсене ырӑ суннӑн туйӑнать.***

***– Ҫут ҫанталӑк епле илемлӗ паян. Ҫутӑр-ха, ҫутӑр, тӑван ҫӗре хуплатӑр юр. Кӗр калчисем аван хӗл каҫӗҫ хулӑн кавир айӗнче, ҫуркунне вара хӑвӑрт вӑй илӗҫ, – сӑмах хушрӗ манпа танлашнӑ арҫын.***

Кашни ҫынна кӑмӑл валеҫет тейӗн: пуринпе те пӗр чӗлхе тупать, калаҫӑва сыпӑнтарать Валерий Васильевич. Сӑмах – Тӑвай район администрацийӗн пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗ – АПК аталанӑвӗпе экологи пайӗн ертӳҫи Валерий Чайкин ҫинчен. Тӗп ӗҫне чыслӑн пурнӑҫланипе пӗрлех сӑвӑ-статья хайлама пултарать: ахальтен мар 2002 ҫултанпа Раҫҫей Журналистсен союзӗн йышӗнче. Валерий Васильевич – «Хыпар», «Чӑваш хӗрарӑмӗ», ытти кӑларӑмӑн хастар авторӗ. Виҫӗ ҫул каялла вӑл пуҫарнипе Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче паттӑрлӑх кӑтартнӑ ентешсем ҫинчен «Вӗсем Ҫӗнтерӗве ҫывхартнӑ» кӗнеке-палӑк кун ҫути курчӗ. Районти шкулсенче вӗренекенсен сӑввисен «Кӗтнепе Эль хушшинче» альманахне пичете хатӗрлеме пулӑшрӗ.

Сцена ӑсти те Валерий Васильевич. 1978 ҫулта А.Ӗҫхӗл ҫырнӑ «Виҫӗ туй» спектакле сцена ҫине кӑларма пулӑшнӑ чухне палӑрнӑ унӑн артист пултарулӑхӗ. Хӑй те Чудов бригадир сӑнарне калӑпланӑ. Тӑвайсем ҫав ҫул асӑннӑ кӑтартупа республикӑри ялсенчи халӑх театрӗсен хушшинчи смотр-конкурсра пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Чӑваш Ен телекуравӗ те ҫырса илнӗ, ҫав спектакль унӑн фонотекинче упранать. «Унтанпа ҫирӗм ытла тӗрлӗ рольпе сцена ҫине тухрӑм, кашни сӑнара ӑс-хакӑл витӗр кӑларса калӑплаттӑм, куракан ӑнланса йышӑнтӑр теттӗм. И.Алексеев, Н.Кузьмин, В.Иванов, Г.Терентьев, С.Иванов режиссерсене тав тӑватӑп чун туртӑмне аталантарма пулӑшнӑшӑн», – тет Валерий Васильевич.

В.Чайкин Н.Сидоров ҫырнӑ «Кантӑкран шаккарӗ хамӑр ял каччи» /Прунькка/ тата «Гражданла брак» /Якуркка/ камитсенче калӑпланӑ сӑнарсем халӗ те асӑмра. Режиссер пултарулӑхӗ те ют мар ывӑнма пӗлмен хастаршӑн. Н.Угарин драматургӑн «Улька кинӗн виҫӗ кинӗ» мыскарине сцена ҫине кӑларнӑ. Тӑвайри халӑх театрӗ унпа районти чылай ялта пулнӑ, ҫынсене савӑнтарнӑ. Халӑх юррисене те шеп шӑрантарать Валерий Васильевич, концертсене хастар хутшӑнать. Унӑн юррисем хыҫҫӑн халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупать.

Тепӗр ырӑ ен пур район администрацийӗнче чылай ҫул тӑрӑшакан маттур йӗркелӳҫӗн: таса кӑмӑлпа ӗҫлекене вӑхӑтра хавхалантарма пӗлет. Пӗлтӗртенпе ферма ӗҫченӗсен кӑтартӑвӗсене уйӑхсерен пӗтӗмлетессине, мала тухнисене «Тӑвай районӗнчи сӗт ытларах сӑвакан чи лайӑх коллектив» кусса ҫӳрекен кубок, парне, Диплом парассине пуҫарнӑ. Ҫавӑн пекех вырма тапхӑрӗнче комбайнерсен тӑрӑшулӑхне палӑртмасӑр хӑварман. 1000 центнер тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗлесен «уй-хир карапӗн» хуҫине Хисеп хучӗпе чысланӑ, техника ҫине «Ылтӑн пучах» ҫыпӑҫтарнӑ.

Пичет кунӗнче е пӗр-пӗр уявра асра юлмалли парне кӳни те вӑл чӑннипех пысӑк чунлӑ пулнине ҫирӗплетет. Хӑйӗн шучӗпе районти библиотекӑсене кӗнекесем парнелесе, тӗрлӗ хаҫат-журнал ҫырӑнса парса, «Ачалӑхшӑн, ачалӑх ячӗпе» марафон пухмачне укҫа-тенкӗ хывса ашшӗпе амӑшӗ пӗчӗкренех ыттисене ырлӑх кӳме вӗрентсе ӳстернине пурнӑҫа кӗртет.

Яваплӑ должноҫсенче вӑй хурса тӗрлӗ шайри мероприяти йӗркелессипе пысӑк опыт пухнӑ вӑл, пысӑк уявсен сценарисене те хӑех ҫырать. Концерт программисене те килӗшӳллӗ ертсе пырать. Ҫулталӑк вӗҫӗнче ял ӗҫченӗсен кунне ҫӗнӗлле ирттерсе тӗлӗнтерчӗ. Ял хуҫалӑх производствинче вӑй хурса тыр-пул, аш-пӑш, ытти продукци туса илекенсем вырнаҫнӑ сӗтелсем пучаха аса илтерчӗҫ. Ҫав мероприятире чысланӑ «Тӑвай районӗнчи ял хуҫалӑхӑн чи лайӑх ӗҫченӗ» медале чылай ҫемьере реликви вырӑнне упрасси иккӗлентерместь. Ҫынлӑх туйӑмӗ ҫакӑнта та палӑрмасть-и-ха? Чӑн-чӑн ертӳҫӗн ҫапла пулмалла та. Валерий Васильевич Чайкин пек. Сасса хӑпартмасӑр, теприне хурламасӑр, ырӑ тӗслӗх кӑтартса, коллективри кашни ҫынна хисеплесе, кирлех пулсан – пулӑшса.



● *Валерий Чайкин /сулахайран виҫҫӗмӗшӗ/ С.Михайлов, Б.Алексеев тата С.Хумышев фермерсемпе.*

– Сире вӑй-хӑват парса тӑракан ҫӑл куҫ ӑҫтан пуҫланнине пӗлес килет, – кӑсӑклантӑм эпӗ.

Ҫак самантра аса илӳсен авӑрне путрӗ пулас. Ҫӗнӗ Ишпуҫӗнчи, Амалӑхри шкулсенче ӗҫленине, ВЛКСМ Тӑвай райкомӗнче, каярахпа парти райкомӗн инструкторӗнче, пай пуҫлӑхӗнче тӑрӑшнине куҫ умне кӑларчӗ ахӑртнех. 1990 ҫулта ӑна райӗҫтӑвком председателӗн ҫумне ҫирӗплетнӗ. Унтанпа – район администрацийӗнче. Пӗр тапхӑр Чутей ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗнче тӑрӑшнӑ хыҫҫӑн район администрацине каялла куҫма сӗнеҫҫӗ.

– Ӗҫлеме тытӑннӑранпа 40 ҫул хыҫа юлчӗ. Яланах ҫынпа, халӑхпа пӗрле пулма тӑрӑшнӑ. Аслисенчен вӗренсе пынӑ, ҫамрӑксене тӳрӗ ҫулпа утма хавхалантарнӑ, тивӗҫӗмрен пӑрӑнман, – ҫапла хакларӗ паянхи кунччӗнхи ӗҫ-хӗлне В.Чайкин.

Валерий Васильевичпа Валентина Григорьевна хӗрпе ывӑл ҫуратса ӳстернӗ, пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ. Таня ҫемйипе Сургутра пурӑнать, профсоюз лидерӗ. Андрей районти суйлав комиссийӗн председателӗ. Тӑвай ялӗнче кил-хуҫалӑх ҫавӑрнӑ аслӑ Чайкинсене тӑватӑ мӑнук савӑнӑҫ кӳрет.

– Вӗсем валли вӑхӑт яланах тупатӑп. Тӑваттӑшӗ те арҫын ача. Сывлӑхлӑ ӳсчӗр, спорта юратчӑр. Физкультурӑпа туслӑ ҫын пурнӑҫ ҫулӗпе те ҫирӗп утать, – терӗ В.Чайкин сӑмах хутаҫҫине хупма вӑхӑт ҫитнине систерсе. Каҫ кӳлӗм эпӗ ӑна каллех йӗлтӗр йӗрӗ ҫинче куртӑм...

■ **Альбина НИКИТИНА.**

Автор сӑн ӳкерчӗкӗ

*Ӑслӑлӑх*

# «Тӑван тӑрӑх историне кашнин пӗлмелле»

***Истори наукисен докторӗ Лев Ефимов профессор – 200 ытла статья, 240 яхӑн ӑслӑлӑх ӗҫӗн авторӗ. Ҫак шутран уйрӑмах курӑмли – икӗ томпа тухнӑ Элӗк районӗн энциклопедийӗ. Вӑл Раҫҫей конкурсӗнче 87 регион хушшинче пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ.***



Лев Архиповичӑн ӗҫ биографийӗ Элӗк районӗнчи Чӑваш Сурӑмӗнче пуҫланнӑ. Ҫак ялти шкулта вӑл 25 ҫул ачасене пӗлӳ, воспитани панӑ. Ҫав хушӑрах истори тата обществознани вӗрентекенӗсен районти пӗрлешӗвне, туризм тата тавра пӗлӳ кружокне ертсе пынӑ. Чӑваш Сурӑмӗнче, Элӗкре халӑх музейӗсене йӗркелеме хутшӑннӑ. 2000 ҫулта Л.Ефимова И.Я.Яковлев ячӗллӗ ЧППУна куҫарнӑ. Хальхи вӑхӑтра вӑл тӑван ҫӗр-шыв тата регион историйӗн кафедрин профессорӗ. Раҫҫей историйӗн, историографи, тавра пӗлӳ занятийӗсене пысӑк шайра ирттерет, студентсене тӗпчев ӗҫӗсене явӑҫтарать. Тарӑн шухӑшлӑ, вырӑнлӑ ӑслӑлӑх ӗҫӗсем, шкул ачисем, студентсем валли вӗренӳ кӗнекисем хатӗрлет. Унӑн тӗпчевӗсем республика тулашӗнче те ырӑ ят ҫӗнсе илнӗ.

Лев Архипович кадрсем хатӗрлессипе те нумай ӗҫлет. Юлашки 15 ҫулта вӑл пӗр пине яхӑн историпе право вӗрентекенӗсене хатӗрлес ӗҫе тӳрремӗн хутшӑннӑ, 50 студентӑн ӑслӑлӑх ертӳҫи пулнӑ, ун патӗнче 4 аспирант кандидат диссертацине хӳтӗленӗ.

Лев Архипович Элӗк районӗн общество пурнӑҫне те хастар хутшӑнать. Вӑл районӑн гербне, ялавне, гимнне хатӗрлеме пулӑшнӑ. Элӗк сали 300 ҫул тултарнине, ытти ялӑн юбилейне халалланӑ мероприятисене ирттерессине те вӑлах пуҫарнӑ. Истори палӑкӗсене, чӑваш йӑли-йӗркине, наци культурине упрас енӗпе Л.Ефимов нумай ӗҫлет. Республикӑри чылай шкулта ачасем тӑван ен историне тата культурине унӑн пособийӗсем тӑрӑх вӗренеҫҫӗ.

Тӗнче, Раҫҫей, республика шайӗнчи ӑслӑлӑх практика конференцийӗсене хастар хутшӑнать. Паллӑ пулӑмсене халалласа хӑй те ҫакӑн йышши мероприятисем йӗркелет. А.Золотов ҫуралнӑранпа – 110, Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче ҫӗнтернӗренпе – 65, СССР арканнӑранпа – 20, Мӑн Этмен пӑлхавӗ пулнӑранпа 100 ҫул ҫитнӗ тӗле ирттернӗ конференцисен пӗлтерӗшӗ пысӑк. Уйрӑмах сумли – Романовсем патшана ларнӑранпа 400 ҫул ҫитнине халалласа йӗркеленӗ конференци. Мероприятие 17 регионтан хутшӑннӑ. Конференцие пӗтӗмлетсе ӑслӑлӑх доклачӗсен пуххине кӑларнӑ, унта 70 ытла ӗҫ кӗнӗ.

Л.Ефимовӑн ӑслӑлӑхри, педагогикӑри, обществӑри ӗҫ-хӗлӗ нумай енлӗ тата тухӑҫлӑ. Ҫапах та унӑн пурнӑҫӗнче тӗп вырӑн йышӑнаканни – тӑван ен историйӗ, культури. Вӑл республикӑра истори пӗлӗвне сарас енӗпе нумай ӗҫлет, пичет кӑларӑмӗсенче, радиопа телекуравра тӑван ен культурин ыйтӑвӗсене ҫӗклет. Ҫавӑн пекех вӑл Чӑваш халӑх академийӗн президиумӗн членӗ, ялхула энциклопедине хатӗрлекен пай пуҫлӑхӗ. Лев Архипович – Чӑваш Енри тавра пӗлӳҫӗсен М.П.Петров ячӗллӗ премийӗн лауреачӗ. 2011 ҫулта Пӗтӗм Раҫҫейри тӑван ен литературин конкурсӗнче ҫӗнтернӗ.

**– Лев Архипович, палӑртрӑмӑр ӗнтӗ, историе упраса хӑварас енӗпе нумай ӗҫлетӗр. Эсир тӑрӑшнипе кун ҫути куракан энциклопедисен пӗлтерӗшӗ уйрӑмах пысӑк. Кашни районӑн, хулан пур-и ҫавӑн пек кӗнеке?**

– Ҫак юхӑм иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче пуҫланчӗ. Чи малтан Муркаш районӗн энциклопедийӗ кун ҫути курчӗ. Хальлӗхе 21 районтан 11-шӗн пур. Шупашкар, Ҫӗмӗрле, Ҫӗрпӳ, Красноармейски районӗсен ҫывӑх вӑхӑтра пичетленсе тухасса шанас килет. Элӗксен, сӑмахран, икӗ томпа тухрӗ. Эпӗ унӑн тӗп редакторӗ, авторӗ, пухса хатӗрлекенӗ. Пӗрремӗшӗнче нумай япала валли вырӑн ҫитмерӗ, сиксе юлнӑ самант чылай пулчӗ. Ҫавӑнпах иккӗмӗшне кӑларас терӗмӗр.

**– Энциклопедисене 50 томпа кӑларас текенсем пурри ҫинчен пӗлтӗм. Шухӑша пурнӑҫа кӗртме май килӗ-и?**

– Мӗнле майпа? Мӗнле укҫа-тенкӗпе? Мӗн пур ӗҫ-хӗл тавра пӗлӳҫӗсен хастарлӑхӗпе, пуҫарӑвӗпе, вӑйӗпе пулса пырать. Районхуласен администрацийӗсем пулӑшсан, тӳпе хывсан, тен, ӗмӗт-тӗллев, шухӑш пурнӑҫланӗ те.

**– Укҫи-тенкине те хӑвӑрӑн тупмалла, материалне те хӑвӑрӑнах пухмалла...**

– Ҫапла. Тавра пӗлӳҫӗсем шалу ыйтмаҫҫӗ. Унсӑрӑнах тар кӑларса ӗҫлеҫҫӗ, архивсенче лараҫҫӗ, тӗпчеҫҫӗ. Тавра пӗлӳлӗх, тӗрӗссипе каласан, патриотлӑх ҫинче тытӑнса тӑрать. Чи йывӑрри, паллах, тивӗҫлӗ коллектив пухасси. Элӗк энциклопедине хатӗрлеме, тӗпрен илсен, ҫемье нумай пулӑшрӗ. Манӑн виҫӗ ача та педагог, ӑслӑлӑх кандидачӗсем. Мӑшӑрӑм – филолог.

**– Республикӑра тавра пӗлӳҫӗсем йышлӑ-и?**

– Кашни районтах пур. Вӗсене Чӑваш Енри тавра пӗлӳҫӗсен союзӗ пӗрлештерсе тӑрать. Кашни районӑн, хулан, ялӑн энциклопедийӗ пулсан, кашни ҫемье хӑйӗн йӑх тымарне пӗлсен аван паллах.

**– Эсир Романовсен йӑхӗпе кӑсӑкланнине пӗлетӗп...**

– Вӗсем чӑваш ҫӗрӗнче нумай йӗр хӑварнӑ. I Петӗр, Кӗтерне патша, I Павӑл тата ыттисем те килсе курнӑ пирӗн тӑрӑха. Паллӑ тепӗр пулӑм – Романовсен кукамӑшне Чӑваш Енре пытарни. Вил тӑприне уҫассине пуҫараканссенчен пӗри – эпӗ. Василий архимандритпа пӗрле туслӑ ӗҫлерӗмӗр. 1913 ҫулта Микулай патша хушнипе вил тӑприне уҫнӑ. Кайран виле юлашкисене пӗчӗк тупӑка хурса ҫавӑнтах тепӗр хут пытарнӑ. Ҫиелтен чул хурса хытарнӑ, ятарлӑ паллӑ хӑварнӑ.

**– Патшан кукамӑшех пулнине пӗлнӗ-им ун чухне?**

– Паллах. Юман тупӑкра пытарнӑ ӑна. Ҫӑм чӑлхи, хӗресӗ тата ҫӳҫӗ ҫӗрмен. Археологсем халӗ чавса кӑларнӑ кӗлетке патшан кукамӑшӗ пек туйӑнмасть. Шӑлӗсем вун сакӑр ҫулти хӗрӗнни евӗр чип-чипер, пачах та ватӑ ҫынӑнни пек мар. Вӗсем урӑхларах апатланнӑ т.ыт.те. Кӗлеткене экспертизӑна янӑ. Вӑл иккӗленӳсене уҫӑмлатӗ. Тӗрӗссипе, шырав ӗҫӗсем вӗҫленмен-ха, часавай пулнӑ вырӑнӑн тепӗр пайне чавни лару-тӑрӑва лайӑхрах ӑнланма пулӑшӗ.

**– Вил тӑприсене хускатма юрамасть теҫҫӗ... Леш тӗнче вӑйӗсенчен хӑрамастӑр-и?**

– Тӗрӗссипе, ҫур Шупашкар ҫӑва ҫинче ларать. Турӑ ҫурчӗсене хупсан вӗсен вырӑнне скверсем, парксем тунӑ, хуралтӑсем лартнӑ. Вил тӑприне тапратнӑ тенӗрен... Историе пӗлмелле-ҫке, тӗпчемелле.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА калаҫнӑ**

*Ентешсем ҫинчен*

# Палӑксем те ҫынсем пекех калаҫҫӗ

***Йӗпреҫ поселокӗ 120 ҫул тултарнине паллӑ тунӑ кунсенче «Хыпар» хаҫатӑн вырӑнти корпунктне Мускав хӑни Дмитрий Барановский кӗрсе тухрӗ, хӑйсен йӑхӗпе ҫыхӑннӑ кӑсӑк пӗр япала пӗлтерчӗ.***

Унӑн аслашшӗ Петр Баранов /Барановский/ Йӗпреҫре ҫуралнӑ. Петр Дмитриевич – РСФСР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ, ВООТИК /Пӗтӗм Раҫҫейри историпе культура палӑкӗсене сыхлакан общество/ хисеплӗ членӗ, асӑннӑ общество организацине йӗркелекенсенчен пӗри. Вӑл – ҫӗр-шыври архитектура, истори тата культура палӑкӗсене ҫӗнетес енӗпе нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗ паллӑ реставратор.

«Ҫуралнӑ тӑрӑхӗнче асаттене пачах та пӗлмеҫҫӗ, – терӗ мӑнукӗ калаҫу «ҫӑмхине» сӳтнӗ май. – Мӗншӗн тетӗр-и? Виҫӗ ҫула ҫитсен ӑна ашшӗпе амӑшӗ Вязьма тӑрӑхӗнчи Шуйски вырӑс салине илсе кайнӑ. Кунти тавралӑх архитектурӑн паха палӑкӗсемпе пуян пулни каярахпа унра ҫак ӗҫе юратас туртӑма ҫуратнӑ та пуль ӗнтӗ».

Петр Баранов Мускаври архитектура институтӗнче вӗреннӗ ҫулсенче строительство ӗҫӗпе, архитектурӑпа, археологипе кӑсӑкланнӑ. Ҫавна май студент Раҫҫейӗн авалхи хулисене кайса ҫӳренӗ, истори палӑкӗсене ҫӗнетме хутшӑннӑ.

Диплом илнӗ хыҫҫӑн Ярославль хулинчи 20 яхӑн палӑка тӗпрен юсаса ҫӗнетнӗ. Ҫав хушӑрах вӑл Мускаври, Угличри, Смоленскри, Звенигородри, Аслӑ Ростоври, Калугӑри, Владимирти, Александроври, Истрӑри, Новгородри, Архангельскри паллӑ нумай сооружение «иккӗмӗш пурнӑҫ» панӑ. Чылай ҫула тӑсӑлнӑ реставраци ӗҫӗсен кӑтартӑвӗсем каярахпа диссертаци ҫырма пулӑшнӑ.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 30-40-мӗш ҫулӗсенче Барановский ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ районӗнче, ҫав шутра Ҫурҫӗрте, халӑх искусствине тишкерсе тӗпченӗ. Вӗсем каярахпа «Коломенское» музей пуххин тӗп никӗсӗ пулса тӑнӑ. Барановскин ҫав ҫулсенчи пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫырнӑ чухне вӑл халӑх пултарулӑхӗн чи лайӑх тӗслӗхӗсене хаклама пӗлмен ҫынсемпе вирлӗ кӗрешнине асӑнса хӑварни вырӑнлӑ. Ҫавӑн йышшисемпе пӗрмаях сасӑ хӑпартса калаҫма, «тавҫӑрусӑррисене» ӑнлантарма, вӗсенчен ҫирӗп ыйтма тивнӗ. Архитектурӑн чаплӑ тӗслӗхӗ шутланакан вӑл е ку палӑка патшалӑх хӑйӗн хӳттине илнӗ тата юсаса ҫӗнетмеллисен шутне кӗртнӗ хыҫҫӑн тин реставратор кӑштах лӑпланнӑ.

Ытлашши вӗриленни тепӗр чухне инкек те кӳнӗ. Акӑ пӗр тӗслӗх. 1934 ҫулта совет правительстви I Петӗр патша вӑхӑтӗнчех лартнӑ Сухарев башнине пӑсма йышӑннӑ. «Архитектурӑпа историн тата культурӑн чаплӑ палӑкне ҫӗмӗрмелле мар. Унта I Петӗр йӗркеленӗ математикӑпа навигаци ӑслӑлӑхӗсен шкулӗ вырнаҫнӑ, – тесе Сталин патне янӑ ҫыру авторӗсен хушшинче Петр Барановский те пулнӑ. Анчах «халӑхсен ҫул пуҫӗ» Раҫҫей интеллигенчӗсен – архитекторсемпе ӳнерҫӗсен, ҫыравҫӑсемпе искусствоведсен – сассине тӑнламан. Шел, Нева ҫинчи хулана илем кӳрекен палӑка аркатнӑ.

Ҫапах та Петр Барановский тата унпа пӗр шухӑшкӑмӑллӑ хастарсем Мускаври Хӗрлӗ лапамри Василий Блаженный чиркӗвне упраса хӑварма пултарнӑ. Ентешӗмӗр ҫакӑншӑн Гулагӑн хытӑ сакки ҫинче темиҫе ҫул «каннӑ», Ҫӗпӗрӗн вӗҫҫӗр-хӗрсӗр тайгинче кӗреш кедрсене алӑ пӑчкипе касса йӑвантарнӑ.

Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫипе ун хыҫҫӑнхи тапхӑрта Барановский нимӗҫ фашизмӗ Совет ҫӗрӗ ҫинче тунӑ хӑрушӑ ӗҫсене тӗпчекен патшалӑх комиссийӗн членӗ пулнӑ май уҫӑмлӑн курса ӗненнӗ: вӑрҫӑ халӑхӑн пин-пин чаплӑ палӑкне йӗркерен кӑларнӑ! Петр Дмитриевич ертсе пынипе ҫамрӑк реставраторсем вӗсене ҫӗнӗ сӑн пама хутшӑннӑ.

Культурӑн юхӑнтарнӑ палӑкӗсене «чун кӗртнӗ» хушӑрах Петр Дмитриевичӑн ҫынсен тимсӗрлӗхне пула сӑнӗсене ҫухатакан сооруженисемшӗн те чунӗ ыратнӑ. Вӗсенчен пӗри – Мускаври Крутицкий керменӗн ансамблӗ. Унӑн ӗмӗрне вӑрӑмлатма ВООТИКӑн Тӗп Канашӗ ҫумӗнчи ятарлӑ сӑнав мастерскойӗн ӗҫченӗсем, Барановскин вӗренекенӗсем, нумай тӑрӑшнӑ.

Петр Барановский хӑварнӑ ҫул ҫутӑ та пархатарлӑ. Вӑл вӑрӑм ӗмӗр пурӑнса ирттернӗ. Ҫут тӗнчерен тӑхӑр теҫеткерен иртсен 1987 ҫулта уйрӑлнӑ. Мухтавлӑ та сумлӑ ҫыннӑмӑрӑн пурнӑҫӗ – Тӑван ҫӗр-шыва чӗререн юратнӑ, уншӑн мӗн пур ӑсталӑхне парса тӑрӑшнӑ, йывӑрлӑхсемпе чӑрмавсем хуҫма пултарайман гражданин ырӑ тӗслӗхӗ.

Шел, Йӗпреҫре Барановскин ҫывӑх тӑхӑмӗсем пурӑнмаҫҫӗ. Унӑн виҫҫӗмӗш сыпӑкри тӑванӗ, ӗмӗрне Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗнче йывӑҫ касса ирттернӗ Геннадий Баранов, вунӑ ҫул каялла ҫӗре кӗнӗ. Петр Дмитриевичӑн мӑнукӗ Дмитрий Йӗпреҫе килсен уҫӑ тӳпе айӗнчи этнографи музейӗнче пулчӗ, йывӑҫ палӑксемпе, чӑвашсен авалхи йӑли-йӗркипе паллаштаракан экспонатсене киленсе сӑнарӗ. Сыв пуллашас умӗн ӑна Йӗпреҫ районӗн кӗске энциклопедине парнелерӗмӗр. «Ку кӗнекере асатте ҫинчен пӗр йӗрке те ҫуккине пӗлетӗп. Ҫакӑ – манӑн айӑп. Иккӗмӗш кӑларӑмра ӑна вырӑн параҫҫех пулӗ», – ырӑ шанӑҫпа уйрӑлчӗ сумлӑ хӑна.

Мускав архитектурин историне лайӑх пӗлекен Михаил Ильин писатель ентешӗмӗр пирки ҫапла ҫырнӑ: «Барановскин ӗҫӗсем тӗрлӗ калӑпӑшлӑ япаласемпе килӗшӳллӗн ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпах вӗсене илӗртӳллӗ ювелир парнисемпе танлаштарас туйӑм ҫуралать. Реставратор мана «Тӳпенелле туртӑнакан тӗп хула» кӗнеке ҫырнӑ чухне нумай пулӑшнӑ. Сӑпайлӑ ҫыннӑмӑрӑн иксӗлми пултарулӑхне вулакансен умне кӑларас тӗллевпе ҫӗнӗ ӗҫӗме ӑна халаллас тетӗп...»

Шел, ҫыравҫӑ ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртеймерӗ. Вӑл та темиҫе ҫул каяллах ҫут тӗнчерен уйрӑлнӑ иккен.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Пулни-иртни*

# Ҫемьере – вӑрҫӑри пек

***Ҫынсем ҫавӑнпа ҫывӑхланаҫҫӗ вӗт – ҫемьере килӗшӳпе тӑнӑҫлӑх хуҫаланмалла. Шел те, чылай ҫемьере пачах тепӗр майлӑ лару-тӑру. Ҫакӑ Тӑвай районӗн прокуратури айӑплав пӗтӗмлетӗвӗсене ҫирӗплетсе суда ярса панӑ уголовлӑ ӗҫсенчен те лайӑх курӑнать.***

33-ри Мирон Ворончак – Украина гражданинӗ, Львов облаҫӗнче регистрациленнӗ. Тӑвай районне килсе лекнӗ – пӗр хӗрарӑм патне киле кӗнӗ. Тав тӑвас вырӑнне унпа хирӗҫсе кайнӑ. Кил хуҫин хӗрӗ лӑпланма ыйтнӑ та – арҫын пушшех тилӗрнӗ. Ворончак хӗр ача ҫемьери харкашусем пирки тӑванӗсене каласа панине аса илнӗ те ун ҫине сиксе ӳкнӗ. Ҫӳҫӗнчен ярса илнӗ, тӗртсе янӑ. Хӗр ача сӗтел ҫине тӑрӑннӑ та – пуҫне, кӗлеткине амантнӑ. Ашшӗ вырӑнӗнче пулмаллискер, тен, ӑна татах хӗнетчӗ пуль – амӑшӗ хушша кӗнӗ май хӗр ача кӳршӗсем патне тарса ӳкнӗ.

Уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ та – Ворончак айӑпне йышӑнса ӳкӗннӗ-ха. Ачана утьӑкка сиктернине те аса илнӗ. Халь ӳсӗр пулнипе аташнӑмӗн. Анчах ҫакӑ ӑна тӳрре кӑлараймӗн.

Ютран килнӗ тепӗр «хӑна» та кунта хӑйне йӗркесӗр тытнӑ. 30 ҫулти Вячеслав Ложанов – Томск облаҫӗнчен. Вӑл та Тӑвай районӗнче пӗр хӗрарӑм патӗнче ӑшӑ кӗтес тупнӑ. Мӑшӑрӗ темиҫе кунлӑха тесе Шупашкара тухса кайсан вӑл хӑйне ирӗклӗ туйса илнӗ. Анчах хӗрарӑм тепӗр куннех таврӑннӑ – ку ҫемье пуҫне килӗшмен. Хӗрарӑма диван ҫине ҫӗклесе ҫапнӑ, пекӗ кӑларса ӑна вӗлерессипе сехӗрлентернӗ. Мӗскӗн кӑшкӑрса макӑрнӑ, хӗрхенме ыйтнӑ. Арҫын пӳртрен тухнӑ.

Тепӗр кунне хӗрарӑм чӳрече сӑрласа пулӑшмашкӑн кӳрше каҫнӑ. Ҫӗрле тин таврӑннӑ. Ложанов килтех – ӳсӗр. Тӳрех мӑшӑрне тапӑннӑ – DVD-проигрывателе ӑҫта хутӑн? «Вӑл кӗрлени йӑлӑхтарса ҫитерчӗ, кӳршӗсене патӑм», – хуравланӑ хӗрарӑм. Арҫын каллех урса кайнӑ, кӑшкӑрашма пуҫланӑ. Мӑшӑрӗ урама тарса тухнӑ. Путсӗр вара ӑна хӑваласа ҫитнӗ, пеккине хырӑмӗ тӗлне тытса чиксе пӑрахассипе хӑратнӑ. Хӗрарӑм ӑна лӑплантарма тӑрӑшнӑ – кӑлӑхах. Ҫапах вӑл самантлӑха тимлӗхне ҫухатнипе усӑ курса кӳршисен картишне тарса кӗнӗ, унтан пахча урлӑ тепӗр кӳршисем патне каҫса телефонпа полицие шӑнкӑравланӑ.

Ложанов айӑпне йышӑннӑ-ха, анчах Томск облаҫӗнче психиатр патӗнче шутра тӑрать-мӗн – эппин, уголовлӑ йӗркепе явап тыттармалла мар. Тӗрӗслев вӑл суйнине ҫирӗплетнӗ. Апла тӑк суд умне тӑма тивӗҫ.

Хамӑрӑннисем те ӳксе юлмаҫҫӗ – ятлӑ-сумлӑскерсемех ҫывӑх ҫыннисем ҫине алӑ ҫӗклеме именмеҫҫӗ. Акӑ – Следстви комитечӗн республикӑри управленийӗн ертӳҫи А.Мигушов район пухӑвӗн депутачӗ Андрей Моряков тӗлӗшпе пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫ. Мӑшӑрӗ ыйтнипе пуҫарнӑскер.

Пӑтӑрмах пӗлтӗрхи ҫурла уйӑхӗн варринче пулнӑ. Моряков арӑмӗпе хирӗҫсе кайнӑ та ӑна кӑкӑрӗнчен тапнӑ. Ҫӳҫӗнчен ярса илсе пӳртрен сӗтӗрсе тухнӑ. Алӑка шалтан питӗрнӗ. Хӗрарӑм каялла кӗме тӑнӑха, лум та илнӗ – уҫайман. Чӳречене те ватнӑ – пур пӗр кӗреймен. Унтан тӑванӗсене чӗнсе илсе пӳрте пӗрле кӗнӗ, телевизорпа компьютера илсе тухнӑ, тӳрех полицие кайнӑ. Медиксем унӑн кӗлетки ҫинче сурансем пуррине палӑртнӑ.

Моряков айӑпне йышӑнман – мӑшӑрне тӗкӗнмен-мӗн. Хирӗҫӳ вара арӑмӗ автомашинӑна ун ҫине ҫыртарма хистенипе сӑлтавланнӑ-мӗн. Хӗрарӑм урӑхларах ӑнлантарнӑ: арҫын кредитшӑн тӳлес темен – ҫавӑнпа хирӗҫсе кайнӑ. Пӗр сӑмахпа, пӗр-пӗрне айӑплаҫҫӗ – вӗҫне-хӗрне тупса пӗтерейммӗн. Ҫак лару-тӑрура ачисене шел. Вӗсенчен пӗри юридици факультетӗнче вӗренет – аслӑ шкул хыҫҫӑн прокуратурӑра ӗҫлесшӗн. Ҫемьери ҫак лару-тӑру унӑн ӗмӗтне татасси те инҫе мар. Моряков тӗлӗшпе пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫпе суд тивӗҫлӗ йышӑну турӗ.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА, Тӑвай районӗн прокурорӗ**

*Чӑн пулни*

# Чун парӑмӗ

***– Аслӑ юлташӑм Юрий Петухов ҫӑмӑл машинипе аварие лексе вилни ҫинчен илтсен питӗ хурлантӑм, – терӗ Ишлей шкулӗнче пӗрле вӗреннӗ тантӑшӑм. – Ун умӗнче чун парӑмӗ пур манӑн, ӑна татаймарӑм...***

***– Мӗнле чун парӑмӗ ҫинчен калаҫатӑн эсӗ? Ун пекки те пур–и вара? – сӑмах мӗн пирки пынине чухлаймарӑм малтанах. – Укҫа е пӗр-пӗр япала тесен татах.***

***– Пурнӑҫпа ҫыхӑннӑ парӑм ылтӑнран та хаклӑрах. Итле, каласа парам эппин...***

...Ун чухне, ҫур ӗмӗр каялла, улттӑмӗш класс пӗтерсен ӗҫпе кану лагерьне кайнӑччӗ. Киров ячӗллӗ хуҫалӑх уй-хирӗнче тӗрлӗ ӗҫ тунӑ хыҫҫӑн шыва кӗме, кино курма ҫӳреттӗмӗр.

Унӑ шывӗ те юнашарахчӗ, ун хӗрринче кирпӗч завочӗ вырнаҫнӑччӗ. Бульдозерпа ҫӗре купаласа унпа юнашар пӗве тунӑччӗ. Шывне кирпӗч ҫапакан цех валли уҫлатчӗҫ. Кӑнтӑр апачӗ вӑхӑтӗнче ҫавӑнта рабочисемпе пӗрле ачапӑча та чӑмпӑлтататчӗ. Ишме пӗлменнисене аслӑ вожатӑй пилӗкрен тарӑнрах вырӑна кӗме хушмастчӗ. Иринӑн тусӗ Юрий ҫав заводра ӗҫлетчӗ, смена хыҫҫӑн савнийӗ патне васкатчӗ. Пултаруллӑ спортсмен пулнӑ май пире футболла, волейболла выляттаратчӗ.

Апатланнӑ хыҫҫӑн пӗррехинче ҫапла шыва кӗме антӑмӑр. Эпӗ ишме пӗлместӗп, йытӑлла тапаҫланатӑп кӑна. Апла пулин те шикленмесӗрех пӗвене кӗтӗм, утӑм турӑм, тепре... Сисмен те – тарӑнрах вырӑна ҫитсе тӑтӑм. Каялла ҫаврӑнтӑм, ҫырана ҫитмешкӗн виҫӗ-тӑватӑ метр юлсан ура итлеми пулчӗ – кӑкӑр таранах анса кайрӑм. Куҫ умӗнче вӗтӗ хурт явӑнать, ҫӳп-ҫап чӳхенет. Халран кайнӑран путма пуҫланине туйса илтӗм: чул пек анса каятӑп та алӑпа хӑлаҫланса ҫиеле тухатӑп. Ҫав кунсенче Герман Титов тӗнче уҫлӑхне вӗҫсе хӑпарнӑччӗ. «Космонавтсем тӳпере ҫӳреҫҫӗ, эпӗ вара...» – вӗлтлетсе илчӗ шухӑш.

Унччен те пулмарӗ – такам мана хӑватлӑ аллипе ярса илчӗ те ҫерем ҫине туртса кӑларчӗ. Хура трусси пӗвере хывӑнса юлнӑран хам ҫаппа-ҫарамас, «намӑс» вырӑна алӑпа хуплама та тавҫӑрса илеймерӗм. Ҫӑлавҫӑ тепӗр хут чӑмса труссие илсе тухрӗ...

Мана вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ Юрий Петухова ун чухне тав тума та пӗлмен. Ӑссӑрла хӑтланнӑшӑн атте-анне ятласран хӑраса смена вӗҫленсен те тӑван яла таврӑнмарӑм, ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен Ишлейри кукамайпа кукаҫи патӗнче пурӑнтӑм.

Вӑхӑт иртнӗ май аслӑ тусӑмӑн паттӑр ӗҫӗ манӑҫрӗ пулмалла. Хурлӑхлӑ хыпар илтсен кӑна иртни куҫ умне тухса тӑчӗ. Парӑма тавӑрмашкӑн кая юлнишӗн ӳкӗнетӗп. Мана ҫӑлса хӑварнӑ ҫын хӑй те халӗ леш тӗнчере. Тӑпри ҫӑмӑл пултӑрччӗ унӑн.

Ултӑ теҫетке ҫула хыҫа хӑвартӑм пулин те ишме вӗренеймерӗм. Атӑл хӗррине ансан та пилӗкрен тарӑнрах вырӑнта шыва кӗме шикленетӗп.

**Тантӑшӗ каласа панине Александр МОКИН ҫырса илнӗ.**

## Сиплевçĕ

### Кишĕр сĕткенĕ

Кишĕр сĕткенĕ организма йĕркене кĕртме пулăшать. Вăл – А витаминăн чи пуян çăл куçĕ, апата ирĕлтерекен органсем те ăна хăвăрт йышăнаççĕ. Çак сĕткенре пире питех те кирлĕ В, С, Д, Е тата К витаминсем пур. Çавăн пекех вăл ерекен чирсене хирĕç тăма пулăшать.

Сĕткен нерв тытăмне хӳтĕлет, вăй-хала ӳстерет. Тепĕр чухне пĕверпе пыршăлăх чирĕсем кишĕр сĕткенĕнчи хăш-пĕр япала çитменнипе пуçланма пултараççĕ. Сĕткен пĕвере палăрмаллах тасатать.

### Лимонсăр май çук

● Шăл çине чул пухăнасран тухтăрсем лимон çиме сĕнеççĕ.

● Шăлсем шап-шурă пулччăр тесен вĕсене лимон хуппипе сăтăрмалла.

● Шăл тунипе шăлсем сиенленесрен вĕсене кашни кунах лимон сĕткенĕпе тасатмалла. Кариес аталанма пуçласан çăвара лимон сĕткенĕ хушнă ăшă шывпа чӳхемелле.

● Çăвартан ырă мар шăршă кĕнине пĕтерме, апат çиес килнине лайăхлатма кашни кунах лимонăн вĕтетнĕ хуппине /1 чей кашăкĕ кирлĕ/ сахăрпа е пылпа хутăштарса çимелле.

● Çур лимон сĕткенне çур стакан ăшă шыва ярса пăтратмалла, стоматитран сипленнĕ чухне ĕçмелле.

### Организма пан улми уксусĕпе тасатасси

Пан улми уксусĕ пĕрмаях ывăнсан, мăнтăрлансан, пуç ыратсан, çаврăнсан, юн пусăмĕ час-часах ӳссен, шăнса чирлесен, апатпа наркăмăшлансан усăллă. Вăл пĕр-пĕр чиртен сиплемест, организма кирлĕ микроэлементсем парать, пыршăлăха дезинфекцилет.

Пан улми уксусне апатчен 20 минут маларах кунне 1-3 хут ĕçеççĕ. Вăл пахалăхсăр апат çисе наркăмăшлансан пулăшать.

Лăпкă çывăрма, организмран сиенлĕ япаласене кăларма çакнашкал хутăш хатĕрлемелле. 2-шер чей кашăкĕ пан улми уксусĕпе пыла хутăштармалла, вĕренĕ 1 стакан ăшăрах шыва ямалла, пăтратмалла. Кашни кунах çывăрма выртас умĕн ĕçмелле.

Çак уксуспа ангинăран сипленнĕ чухне те анлăн усă кураççĕ. 1 чей кашăкĕ пан улми уксусне 1 стакан шыва ямалла. Çак шĕвекпе пыра кашни сехетре чӳхемелле.

### Эмел вырăнне – хурăн çулçи

Хурăн çулçи организма çирĕплетет, чĕрепе юн тымарĕн тата сывлав тытăмĕсене йĕркене кĕртет, япаласен ылмашăвне ӳстерет. Çавăн пекех вăл хĕрарăмсен ар парĕсен ĕçне ырă витĕм кӳрет.

**Атеросклерез чухне** хурăн кăчкин шĕвекне ĕçме сĕнеççĕ. 10 грамм типĕтнĕ чĕр тавара 1 стакан вĕри шыва ямалла, 15 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла, вĕренĕ шыв хушса виçене малтанхи шая çитермелле. Кунне 3-4 хут 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле. Çак тĕллевпех шĕвеке тепĕр мелпе те хатĕрлеме пулать. 10-15 грамм хурăн çулçине вĕренĕ 1 стакан шыва 4-5 сехетлĕхе ямалла, сăрăхтармалла. Кунне 4-5 хут 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле.

### Ӳслĕкрен – ансат мелсем

● 10 сухана, 1 пуç ыхрана тасатмалла, вĕтĕ турамалла. Сĕте ярса çемçеличчен пĕçермелле. Ун хыççăн кăштах пыл хушмалла. Яра куна 1-ер апат кашăкĕ çимелле.

● 500 грамм пуçлă сухана тасатмалла, 400 грамм сахăр хушмалла, 1 литр шыва ярса вăйсăр çулăм çинче 3 сехет пĕçермелле. Хутăш сивĕнсен 50 грамм пыл хушмалла, кĕленче савăта ямалла, хупăлчапа хупламалла. Апат хыççăн 4-шар апат кашăкĕ çимелле.

### Тимĕр çитмест-и? Инжир çийĕр

Тимĕр çитменнипе юн пăсăлсан инжир çиме тăрăшмалла. Унра тимĕр пан улмиринчен ытларах.

● Бронхит чухне е типĕ ӳслĕк канăçсăрлантарсан 2 апат кашăкĕ типĕтнĕ инжира 1 стакан сĕте ярса пĕçермелле, кунне 2-4 хут çуршар стакан ĕçмелле.

● Вар хытсан кашни кунах ирхине апатчен çур сехет маларах инжир çимелле. Е 1-ер инжирпа пан улмине аш арманĕпе авăртмалла, ирхине выç варла çимелле.

● Çăпан тухсан типĕтнĕ инжира /малтан шӳтермелле/ ыратакан вырăна тытмалла.

**Асăрхаттарни.** Кĕлетке виçи ӳссен, сахăр диабечĕ, подагра чухне, чулсем пулсан инжир çиме юрамасть.

### Нумай çул чир-чĕрсĕр пурăнма

Çак "эмел" ĕмĕре тăсать, мĕншĕн тесен нумай чиртен, çав шутра атеросклерозран, усал шыçăран сыхлать, тĕрлĕ амак хыççăн вăй кĕртет. Хĕрен тымарне вĕтĕ теркăпа хырмалла. 1 стакан "пăтта" 200 миллилитр шурă эрехе ямалла, 1 талăкран пăрса илмелле. 1-ер стакан пыл, кишĕрпе хĕрлĕ кăшман сĕткенĕ, аш арманĕпе авăртнă 2-шер стакан аçтăрхан мăйăрĕ, иçĕм, 2 лимон /хуппипе пĕрле вĕтĕ турамалла/ хушмалла. Лайăх пăтратмалла, кĕленче савăта ямалла, хупăпа хупламалла. Кунне 3 хут апатчен 1 сехет маларах 1-ер десерт кашăкĕ çимелле. 2 уйăх сипленмелле, ун хыççăн 20 кун тăхтав тумалла, тепĕр хут сипленмелле.

### Иммунитет çирĕпленет

Пĕр пек виçепе шурлăх туни /сушеница топяная/, мелисса, кушак курăкĕн /валериана/ тымарĕ, хăмла пучахĕ, çăка чечекĕ, матрӳшке курăкĕ /душица/, чĕре курăкĕ илмелле, хутăштармалла. 1 апат кашăкĕ чĕр тавара вĕрекен çур литр шыва ямалла. Заварка чейникне ăшă япалапа чĕркемелле. Шĕвеке сехет çурă – 2 сехет пиçĕхтермелле. Яра куна 2-3 хут ĕçмелле.

Иммунитета çирĕплетет, чĕре таппине йĕркене кĕрет, невроз чухне усăллă.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Пурнăç – малалла!

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.



Вулаканăмăрсем пĕлеççĕ ĕнтĕ: пирĕн çĕр-шывра кăрлач уйăхĕн 1-12-мĕшĕсенче Пĕтĕм Раççейри спортпа сывлăх вунă кунлăхĕ иртет, паллах, Чăваш Ен те айккинче юлмасть. Çак акцин малтанхи 8 кунĕнче 400 яхăн мероприяти йĕркеленĕ, унта 330 пин çын хутшăннă. Çĕнĕ çулхи каникула сывлăхне çирĕплетсе ирттермешкĕн кăмăл тунисем спортăн хĕллехи тĕсĕсене ытларах кăмăллани сисĕннĕ: нумайăшĕ йĕлтĕрпе, конькипе, çунапа тата лашапа ярăннă. Кăрлач уйăхĕн 5-мĕшĕнче, Сывлăхпа спортăн пĕрлехи кунĕнче, республикăра пурăнакансем бассейна, тренажер залне тата ытти çĕре тӳлевсĕрех кайма, пĕтĕмпе 4,5 пин спорт сооруженийĕпе усă курма пултарнă. Çак куна халалланă мероприятисене 150 пин çын çитсе килнĕ.

* * *

Çулталăк пуçламăшĕ уяв кунĕсемпе пĕр килнĕрен культура мероприятийĕсемпе уйрăмах пуян пулни куç кĕрет.

Акă Чăваш патшалăх пукане театрĕнче капăр чăрăш марафонĕ пырать. Чăваш наци библиотекин «Кĕмĕл ĕмĕр» галерейинче илемлĕхе хаклама пĕлекенсене Чăваш художникĕсен союзĕ йĕркеленĕ «Халăха юратса» куравĕ йыхравлать. Экспозицире – Праски Виттин, Николай Карачарсковăн, Владимир Агеевăн, Николай Енилинăн ĕçĕсем. Чăваш наци



● *100 çулти Нурлизамал Камалетдинова.*

музейĕнче çавăн пекех «Чăваш Ен çирĕммĕш ĕмĕрте», «Çут çанталăк тата çын», «Хыçрах сăрт-ту, хыçрах хуйхă, хыçрах вăрçăллă Афган», Шупашкар фотографĕн Владислав Алмазкинăн «Каçхи хула» выставкăсем йĕркеленĕ. Çак кунсенче Чăваш патшалăх ӳнер музейĕ те куракана хапăл пулнă. Ашшĕ-амăшĕпе ачисем каникул кунĕсенче вырăс тата ют çĕр-шыв искусствипе паллашма пултарнă. Çавăн пекех кунта «Халăх туйĕ художник куçĕпе. Символика, йăлайĕрке, сăнарсем, хальхи самана», «Чернобыль зони» куравсем ĕçлеççĕ. Сăрă тĕнчи, художниксем пирки сăмах пуçартăмăр пулсан юбилей пирки те асăнар. Кăрлачăн 8-мĕшĕнче ЧР тава тивĕçлĕ художникĕ Раиса Терюкалова 75 çул тултарнă. Раиса Фоминична Улатăр районĕнчи Кувакино ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Унăн паллăрах ĕçĕсем: «Чаепитие» батик, «По мотивам «Нарспи», «Чувашский фольклор» картинăсем тата ытти те.

Раштавăн 7-мĕшĕнче Раштав /тури чăвашсен Сурхури/ уявĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов тĕп хулари Татиана чиркĕвĕнче уяв кĕллинче пулнă. Уяв кĕллине Шупашкар – Чăваш Ен митрополичĕ Варнава ирттернĕ. Ятарлă службăна Чăваш наци телекуравĕпе тӳрĕ эфирта кăтартнă. Сăмах май, уяв кĕллисем çав каç республикăри кашни чиркӳрех иртнĕ. Вĕсене турра ĕненекенсем йышлăн пухăннă. Ялсенче пурăнакансем те Раштав уявне анлăн палăртнă. Сурхурирен пуçласа Кăшарниччен /кăрлачăн 7-9-мĕшĕччен/ Çветке /святки/ çӳреççĕ. Тĕрлĕ тум тăхăнса хăнана каяççĕ, праçник ячĕпе саламлаççĕ, пĕр-пĕрне парнесем параççĕ. Анатри чăвашсем çак кун тĕлне хуплу янтăлаççĕ, турисем пăрçа кукăлĕ пĕçереççĕ. Вăрнар районĕнчи Кăмпалсем те Çветкене тухнă. Кĕрĕк тавăрса тăхăнса, пичĕсене маскăпа хупласа килĕрен çӳренĕ, Сурхури юррисене шăрантарнă. Хĕрсене – ăнăçлă качча кайма, каччисене лайăх арăм тупма ырă суннă. «Çурта кăçал «çĕнĕ кайăк» вĕçсе килтĕр», – тенĕ. Пӳрте кĕрсен: «Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ пултăр!» – тесе пăрçа, тулă, урпа сапнă. Унтан: «Сурхури, сурхури, сурăхсем путек туччăр-и, арăмсем ача туччăр-и, хĕрсем хĕсĕр пулччăр-и»,– тесе шăрантарнă. Кил хуçисем те парăмра юлман – кăпăклă



● *Кăмпалсем Çветкене тухнă.*

сăрапа сăйланă, кукăльпе хăналанă. Ял çыннисем çак кун пĕрле пухăнса юртан 2014 çул паллине – Лашана – ăсталанă. Паллах, юр кĕлетке тума та манман. Умра – кивĕ Çĕнĕ çул. Ăна та пĕрлех, туслăн уявлама палăртнă Кăмпалсем.

Патăрьел районĕнчи Сителсем те культура çуртĕнче Раштав уявне анлăн палăртнă. Чăваш тумĕ тăхăннă хĕрсемпе хĕрарăмсем пуян Иван тата чухăн, анчах питĕ усă кăмăллă Трофим патĕнче «хăнара пулнă». Чăваш юрриташшипе савăнтарнă, юмăç пăхнă. Алена Васильевăпа Оксана Хомуткина фольклор уявĕн мĕн пур йăли-йĕркине пăхăнса «Сурхури» шоу-программа йĕркеленĕ.

Юрă-кĕвĕ, йăла-йĕрке пур тăк – спорт валли те вăхăт тупăнатех. Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи Аслă Арапуçра ав кăрлачăн 7-мĕшĕнче хоккеистсен йăлана кĕнĕ Раштав турнирĕ пулнă. Шкул çумĕнчи хоккей площадкинче 4 команда тĕл пулнă. Хĕрӳ тупăшура Шупашкарти аслă шкулсенче вĕренекен яшсен команди мала тухнă. Красноармейскисем воллейболла выляс енĕпе Сурхури турнирĕ ирттернĕ. Унта районти 6 команда вăй виçнĕ. Уяв ăмăртăвĕнче «Уют-Монтаж» команда мала тухнă.

Елчĕк районĕнчи Яманчурел ялĕнче вара çак кунсенче çĕнĕ хоккей коробкине уçнă. Ăна Александр Ефимов учителе асра тытса унăн ятне панă. Апла тăк – шăпăрлансем каникула усăллă ирттерĕç. 2014 çулăн малтанхи кунĕсенче Елчĕк районĕнчи Нурлизамал Камалетдинова 100 çулхи юбилейне хăнавĕрле пухсах палăртнă. Хăйĕн менельникĕ тĕлне вăл ал



● *Раиса Терюкалова.*

арманĕпе кĕрпе авăртнă, кукăль пĕçернĕ. Ял çыннисем калана тăрăх – унăн аллинче яланах йĕп кăна мар, мăлатукпа пуртă та «ташланă». «Нумай пурăнни çемье çирĕп пулнипе, ĕçченлĕхпе, сывă пурнăç йĕркине пăхăннипе çыхăннă», – тет Нурлизамал Хайертдиновна.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА, Роза ВЛАСОВА**

*Спорт*

# Пĕр çулта – виçĕ çĕнтерӳ

***Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен Анастасия Тарасовăшăн 2013 çул яланлăха асра юлĕ. Пĕлтĕр вăл сумо енĕпе иртнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнче мала тухса Раççей спорт мастерĕн нормативне тултарнă, кĕрешӳ енĕпе те çĕр-шыра пĕрремĕш пулнă. Иртнĕ çулах спортсменка тĕнче чемпионатĕнчен çĕнтерӳпе таврăннă.***



● *Анастасия Тарасова хăйĕн тренерĕпе Николай Петровпа.*

«Чемпионатра призерсен йышне кĕме ĕмĕтленеттĕм паллах. Пĕрремĕш пуласса хам та кĕтмен, халĕ те ĕненес килмест», – хавхаланса каласрĕ Анастасия Тарасова. Ăмăртура пирĕн енteш Узбекистан, Киргизи тата Монголи спортсменĕсемпе вăй виçнĕ. Финалта Хусанта иртнĕ Пĕтĕм тĕнче Универсиадин çĕнтерӳçине Татьяна Зыряновăна /136 кг/ парăнтарма пултарнă. «Унпа кĕрешме çăмăл марччĕ, çапах та юлашкинчен ăна çурăм çине çавăрса хума пултартăм», – аса илчĕ чемпионка.

Настя Çĕмĕрле районĕнчи Çĕнкасра çуралса ӳснĕ. Пĕчĕклех спортпа туслашнăскер уйрăмах велосипедпа чупма тата футбол вăййине кăмăлланă /пике халĕ те уйра мечĕк хăвалама ӳркенмест/. Ача чухнех спортра пысăк çитĕнӳ тăвас, малти вырăна тухас, Олимп вăййисен пьедесталĕ çине хăпарас ĕмĕтпе пурăннă. Çак тĕллевпех 9-мĕш класс хыççăн Олимп резервĕсен училищине вĕренме кĕнĕ. Унта хĕре самбо енĕпе кайма сĕннĕ – вăл Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕнче ĕçлекен Николай Петров тренер патне çул тытнă.

«Пĕр çултах виçĕ çĕнтерӳпе палăрма çăмăлах мар. Чылайăшĕ темиçе çулта та çак çитĕнӳсене тăваймасть. Настьăна вара ăнчĕ», – терĕ Николай Николаевич. Пултаруллă тренер хăйĕн вĕренекенĕсене спортăн тĕрлĕ енĕпе – самбо, дзюдо, кĕрешӳ, сумо – хăнăхтарать. Хăш енĕпе ăнать, çавна суйлаччăр – тĕллев лартнă вăл. Анастасия Тарасова акă кĕрешӳ тата сумо суйласа илнĕ. Тренер патĕнче ăсталăха ӳстерекен ытти çамрăк та маттур. Пĕлтĕр Елена Карпова /Васильева/ кĕрешӳ енĕпе çĕр-шыв чемпионатĕнче бронза медаль çĕнсе илнĕ, Николай Жигаревпа Денис Петров çамрăксен ушкăнĕнче пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене йышăннă. Сергей Андреев, Эдуард Иванов, Николай Кобяков, Сергей Орлов – самбо енĕпе Раççей спорт мастерĕсем. Ксения Миронова, Сергей Бычков, Алексей Столбов, Алексей Федоров чылай турнирта призерсен йышне кĕнĕ.

Чăваш Енре сумо енĕпе пĕрремĕш çитĕнӳсем тунă Анастасия Тарасова спортăн çак тĕсĕпе хăçан кăсăкланма тытăннă-ха? «2011 çулта Чул хулара Пĕтĕм Раççейри турнир ирттермелли «положени» лекрĕ те ăмăртăва хутшăнас терĕмĕр», – терĕ Николай Петров. Чăн та, усси пулнă – пирвайхи ăмăртурах спортсменка виççĕмĕш вырăн йышăннă, çулталăкран – пĕрремĕш. «Сумоистсен кĕрешӳре вăйлă та вăр-вар пулмалла – унсăрăн çĕнтереймĕн. Ăмăрту йĕрки те ăнланмалла: палăртнă йĕртен тухсанах е ӳксенех – выляса яратăн», – хальхаль помост çине тухас евĕр ăнлантарчĕ яппунсен çар искуствин чăн-чăн маçтăрĕ. Раççей патшалăх физкультурăпа спорт университечĕн Çĕнĕ Шупашкарти филиалĕнче аслă пĕлӳ илекен студентка хальхи вăхăтра Европа тата тĕнче чемпионачĕсене хутшăнма хатĕрленет.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

*Саламлатпăр*



***Канаш районĕнчи Атнаш ялĕнче çуралнă, халĕ Шупашкарта пурăнакан Светлана Ивановна ГРИГОРЬЕВĂНА сумлă юбилей ячĕпе ăшăн саламласа çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, хĕвел пек çутă кунçул, ăнăçу сунатпăр.***

***Савнă мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.***

Администрация Козловского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 10 лет из земель с/хозяйственного назначения с кадастровым номером 21:12:110101:172 площадью 1,7 га, расположенного на территории Карачевского сельского поселения, для сельскохозяйственного производства.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429430, Чувашская Республика, г. Козловка, ул. Ленина, д. 55, каб. 22. Справки по телефону: 8(83534)21734.

На основании Постановления Правительства РФ от 11 ноября 2002 г. N 808 "Об организации и проведении торгов по продаже находящихся в государственной или муниципальной собственности земельных участков или права на заключение договоров аренды таких земельных участков", постановлений администрации Кировского сельского поселения Ибресинского района от 05.11.2013г. № 43 "Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Кировского сельского поселения Ибресинского района, выставляемых на торги (аукцион)" администрация Кировского сельского поселения Ибресинского района 16.12.2013 года в 14 часов провела аукцион, открытый по форме подачи предложения по цене и размера годовой арендной платы по лоту № 1, по продаже земельного участка по лоту № 2.

Лот № 1. Земельный участок с кадастровым номером 21:10:020201:601 площадью 374000 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Ибресинский, с/пос. Кировское для ведения сельскохозяйственного производства в аренду сроком на 10 (Десять) лет. Победителем является Курников Андрей Валерьевич.

Лот № 2. Земельный участок с кадастровым номером 21:10:020201:602 площадью 37400 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Ибресинский, с/пос. Кировское для ведения сельскохозяйственного производства в собственность. Победителем является Николаев Александр Николаевич.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппарачĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн Ертӳçин çумĕн – Ĕçсен тата документсемпе тивĕçтерекен управлени пуçлăхĕн Вячеслав Владимирович Трофимовăн йăмăкĕн мăшăрĕ

**Евгений Алексеевич МАТВЕЕВ**

сарăмсăр вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

# Ăратлă чăх чĕппи туяннă

***Çĕнĕ çул умĕн Канашри ăратлă кайăк-кĕшĕк ĕрчетекен завод Свердловск облаçĕнчен ăратлă пĕр кунхи чăх чĕппи 30 пин штук кӳрсе килнĕ.***

Ветврачсем чир-чĕр пуррипе çуккине тупса палăртмашкăн çийĕнчех пурне те тĕрĕсленĕ, 30 кунлăха карантина хупнă. Унччен пӳлĕме йăлт тасатса лайăх дезинфекциленĕ, стенасене шуратнă.

Ветспециалистсем халĕ кашни кунах клиника тĕрĕслевĕ ирттереççĕ, апатпа, шывпа епле тивĕçтернине сăнасах тăраççĕ, ерекен чиртен сыхлама укол тăваççĕ.

Уйрăм усракан пӳлĕмре микроклимат кирлĕ шайра.

**В.ВАЛЕНТИНОВ.**

# Парне валеçнĕ

***Патăрьелĕнчи Юрий Трофимов усламçă çулсерен районти сусăр ачасене Çĕнĕ çул парнипе савăнтарать. Çакă ырă йăла пулса тăчĕ ĕнтĕ.***

Предприниматель пуçарăва малалла тăсса район центрĕнче пурăнакан хĕрĕх ача валли кучченеç хатĕрленĕ. Шур сухаллă Хĕл Мучипе капăр Юр Пике пылак çимĕççене килĕрен валеçсе çӳренĕ. Ача-пăчана савăнтарма, тĕлĕнтерме нумай кирлĕ-и? Пĕчĕкскерсем Хĕл Мучи парнене килех илсе килнине чылайччен ас туса пурăнĕç. Çакăн пек ырă çын ытларах пулинччĕ...

**С.ИВАНОВА.**

*Ултав*

# Çук хваттершĕн укçа илнĕ

***«Çар çапăçăвĕсен ветеранĕсен «Çар пĕрлĕхĕ» ООО ертӳçи Василий Поклаков тавра иртнĕ хĕлле пысăк шăв-шав çĕкленнĕччĕ. Асăннă тытăм Шупашкарта çар çапăçăвĕсен инваличĕсемпе ветеранĕсем валли çĕклеме тытăннă реабилитаци центрне тума чăрмантараççĕ тесе вăл Мускаври Хĕрлĕ лапамра хăйне чĕртсе янăччĕ. Çулталăк вĕçĕнче – каллех пăтăрмах. Урăхларах, анчах ку хутĕнче те ĕç-пуç çав центрпах çыхăннă.***

Республика прокуратури пурăнмалли çурт-йĕр строительствин сферинче саккунсене мĕнле пăхăннине тĕрĕсленĕ. Пĕр хĕрарăм «Çар пĕрлĕхĕн» ертӳçи В.Поклаков Шупашкар хулинче тума палăртнă нумай хваттерлĕ тăхăр хутлă çуртăн эскиз проекчĕпе паллаштарнă хыççăн тулли мар яваплă çак обществăпа 42,5 тăваткал метрлă икĕ пӳлĕмлĕ хваттер тума инвестици килĕшĕвĕ тунă. Ăна тĕпе хурса хĕрарăм хваттершĕн туллин, 1,4 млн тенке яхăн, укçа хывнă. Анчах ООО килĕшӳре пăхнă обязательствăсене пурнăçламан.

Тĕрĕслев çирĕплетнĕ тăрăх – Шупашкар хула администрацийĕ ветерансен пĕрлĕхне асăннă адреспа икĕ хутлă спортпа сывлăх реабилитаци комплексне тума ирĕк панă, ун çумне тĕртсе служба пӳлĕмĕсен икĕ хутлă çуртне тумалла пулнă. Ирĕк паракан документацие малтан палăртнă параметрсене, тĕллеве улăштаракан çĕнĕлĕхсем кĕртмен, çав çурт тăхăр хут таран çĕкленмеллине палăртман. Çийĕнчен хальхи вăхăтра объектра строительствăпа монтаж ĕçĕсене пурнăçламаççĕ, тулли мар яваплă общество регистрациленнĕ вырăнта çук, ĕçлемест.

Республика прокуратури тĕрĕслев кăтартăвĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсем урлă паллаштарнă хыççăн право хуралĕн органĕсенчен темиçе çын та пулăшу ыйтнă – вĕсем те хăйхи пĕрлĕхпе килĕшӳсем тунă, шантарнă хваттерсемшĕн укçа хывнă иккен.

Сӳлерех каланине тĕпе хурса республика прокурорĕн çумĕ тĕрĕслев материалĕсене следстви органĕсене панă. Çавна май В.Поклаков тĕлĕшпе Уголовлă кодексăн 159 статйин 3-4-мĕш пайĕсемпе /ултав/ уголовлă ĕç пуçарнă.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Н.Д.КОНОВАЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пусне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7871. Заказ 7.